Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчеппе тухать

50 (7581) № * Юн кун, 2008 çулхи июлĕн (утă) 9-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Районăн ĕçчен çыннисем

## Маттур хĕрарăмсем



***Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан ĕçченсем районти выльăх-чĕрлĕх пăхакансемшĕн пĕри те ют мар. Мăн Сĕнтĕр ял тăрăхĕнчи Вомпăкасси ялĕнче пурăнакан Лариса Анатольевна Капирова (сулахайри) коммерциллĕ мар автономлă «Януш» организацие ертсе пырать. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхра зоотехник тата осеменатор ĕçĕсенче палăрнă мал туртăмлăскер паян хăй йĕркеленĕ хуçалăхра ăратлă качакасем ĕрчетессипе ĕçлет. Кашмашри сĕт ферминче 19 çул ĕне сăвакан пулса вăй хунă хыççăн юлашки вăхăтра Елена Алексеевна Кириллова кунтах техник-осеменатор ĕçне кӳлĕнчĕ. Çĕнĕ ĕçре çĕнĕлĕхсем шыраса малти опытпа паллашассине тăтăшах малти вырăнта тытать вăл. «Свобода» хуçалăхăн Çатракассинчи ĕне ферминче 5 çул техник-осеменаторта ĕçлекен Вера Сергеевна Якимова (сылтăмри) та ĕнесенчен продукци ытларах илесси вĕсемпе тĕллевлĕ ĕçленипе çыхăннине пытармасть. «Сĕт хакĕ паянлăха йӳнĕ пулсан та унăн пахалăхне ӳстерсен тата хăй хаклăхне чакарсан сĕт те рынок хутшăнăвĕсенче чыслă вырăна çĕнсе илĕ», – терĕ Вера Сергеевна юлташĕсен кăмăлне пĕтĕмлетсе.***

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Кун йĕркинче – симĕс ĕç çи ыйтăвĕсем

## Пулас тухăç пирки паян шутламалла

***Çĕр ĕçченĕн анисенче утă уйăхĕ вăй илсе пырать: ĕнер акара тимленĕ хресчен паян иртен пуçласа каççчен выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре. Çапла пулмалла та, анчах юлашки кунсенчи çумăрсем ял ĕçченне ку ĕçе çанă тавăрса кӳлĕнмешкĕн ниепле те ирĕк памарĕç. Ларутăрăва пĕтĕмĕшле хак пама тата выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçри кăçалхи çĕнĕлĕхсемпе паллаштарма район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп специалист-экспертне (зоотехникне) Татьяна Александровна АЛЕКСЕЕВАНА калаçăва чĕнтĕмĕр.***

**– Татьяна Александровна, паянхи лару-тăру пирки эсир мĕн калама пултаратăр? Çитес хĕл валли хуçалăхсенчи ĕç планĕсемпе пăхнă чухлĕ выльăх апачĕ хатĕрлеме пултарăпăр-и?**

– Сирĕн иккĕмĕш ыйтăва вăхăт тата кашни хуçалăх хăйĕн малашлăхĕ çине епле пăхни кăтартса парĕ. Аталану çулĕпе каяс тесен вара мĕн палăртнине пурнăçламаллах. Ут çине тухнин пуçламăш утăмĕсем йăлтах куç умĕнче. Районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен кăçал 9706 гектар çинчен нумай çул ӳсекен курăксене, 1822 гектар пĕр çул ӳсекен курăксене çулса илмелле. Вĕсенчен выльăхсене йĕркеллĕ хĕл касарма 10228 тонна утă, 15880 тонна сенаж, 20617 тонна силос хатĕрлемелле. Çак ĕçсем пуçланчĕç ĕнтĕ. Июлĕн 8-мĕшĕ тĕлне нумай çул ӳсекен курăксене хуçалăхсем 1935 гектар çинче (20 процент), пĕр çул ӳсекен курăксене 942 гектар (52 процент) çулчĕç. Çулнă курăкран çĕр ĕçченĕсем 474 тонна утă (5 процент), 3840 тонна силос (19 процент), 150 тонна сенаж (1 процент) янтăлама ĕлкĕрчĕç. Выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем вунă хуçалăхра кăна вăй илчĕç. Çакă паллах тивĕçтермелли пулăм мар. Пĕрешкел условисенчех «Ударник» хуçалăх 150 тонна утă, 800 тоннăна яхăн силос янтăлама ĕлкĕрчĕ. Çавăн пекех Ильич яч. хис. хуçалăхра 50 тонна утă тата 500 тонна силос, «Герой» кооператив 1310 тонна, «Свобода» хуçалăх 650 тоннăна яхăн силос, «Восток» 80 тонна утă хатĕрлерĕç. Çак тĕслĕхсем çумăрлă çанталăка пăхмасăрах ĕçлеме май пурри пирки калаççĕ. Ыттисем ĕçе тапранса тухайманнин сăлтавĕ вара техника хатĕр марринче-тăр тесе шутлатăп.

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

Социаллă хӳтлĕх ыйтăвĕсемпе

## «Ача укçи» ӳсрĕ

***Паян пурнăç хăвăрт улшăнать. Çавна май саккунсене те тĕрлĕрен çĕнĕлĕхсемпе улшăнусем кĕртеççĕ. Кăçалхи июнĕн 17-мĕшĕнче Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ «Чăваш Республикинчи «Ача пур гражданссене патшалăх пособийĕсем парасси çинчен» саккуна улшăнусем кĕртесси çинчен» саккун йышăнчĕ. Унпа килĕшӳллĕн ачашăн паракан пособисен виçисем те улшăнчĕç. Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçинчен Н.П. ПЕТРОВАРАН шăпах пособисен калăпăшĕ çинчен тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.***

**– Нина Пантелеевна, уйăхсерен ачашăн паракан пособи виçи мĕн чухлĕ ӳсрĕ?**

– Чи малтанах çакна каласа хăвармалла, ачашăн уйăхсерен паракан пособие ашшĕ-амăшĕсене, ачана усрава илекенсене, опекунсене параççĕ, енчен те çемьери кашни çын пуçне лекекен вăтам тупăш Чăваш Республикинче йышăннă пурăнмалли чи пĕчĕк минимумăн 150 процентĕнчен иртсе каймасть пулсан. Унăн виçи малтанхи пекех çемьере миçе ача тата вĕсем миçе çулта пулнинчен килет.

Калăпăр, çемьере 18 çула çитмен пĕр ача пулсан, ача 2 çула çитиччен пĕччен амăшĕсем 762 тенкĕ илеççĕ. Призывпа çар службинче тăракансен, алимент тӳлессинчен пăрăнса çӳрекен ашшĕ-амăшĕсен çак ӳсĕмри ачашăн пособи 703 тенкĕпе, тулли мар çемьери тата ытти категорисенчи (малалла çак икĕ категоринчи çемьесене «ытти çемьесенче» тетпĕр) çемьесенчи ачашăн 644 тенке тивĕçет. Енчен те çемьери пĕр ача 2 çултан иртнĕ, 18 çула çитеймен пулсан, уншăн пĕччен амăшĕсем 234 тенкĕ илеççĕ. Ку пособи виçи призывпа çар службинче тăракансен, алимент тӳлессинчен пăрăнса çӳрекенсен ачишĕн 176 тенкĕпе, ытти çемьесенче 117 тенкĕпе танлашать.

Çемьере 18 çула çитмен 2 ача пулсан, пособи калăпăшĕ тата та пысăкрах. 2 çул тултарман ачашăн пĕччен амăшĕсем 820 тенкĕ илеççĕ, призывпа çар службинче тăракансен, алимент тӳлессинчен пăрăнса çӳрекенсен ачисем 748 тенкĕ, ытти çемьесенче 674 тенкĕ илеççĕ. Ачасем 2 тата 18 çулсем хушшинчи пулсан, пĕччен амăшĕсем çак ӳсĕмри кашни ачашăн 293-шер, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен пăрăнакансен ачисем 220-шер тенке тивĕçеççĕ, ытти çемьесенче –146-шар тенке.

18 çула çитмен 3 ачаллă çемьесем çакăн чухлĕ илеççĕ пособине: ача 2 çула çитмен пулсан, пĕччен амăшĕсем 1170 тенкĕ илеççĕ, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен тарса çӳрекенсен ачисем – 832 тенкĕ, тулли мар çемьери ачасемшĕн – 1006 тенкĕ, ытти категоринчи çемьесенчи ачасем – 750-шар тенкĕ. 3 ачаллă çемьери ачасем 2 çултан пуçласа 7 çулччен пулсан, пĕччен амăшĕсем çак ӳсĕмри кашни ачашăн 642-шер, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен тарса çӳрекенсен ачисем 305 тенкĕ, тулли мар çемьесенчи ачасем 478 тенкĕ, ытти категорисенчи ачасем 222 тенкĕ илеççĕ. Ачасем 7 çул тултарнă, 18 çула çитеймен пулсан, пĕччен амăшĕсем 993 тенкĕ, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен тарса çӳрекенсен ачисем 376 тенкĕ, тулли мар çемьесенче 829 тенкĕ, ытти категорисенчи çемьесенче 294 тенкĕ илеççĕ.

18 çула çитмен 4 е ытларах ачаллă çемьесенче пособи виçисем çакăн пек. Ача 2 çула çитмен пулсан, пĕччен амăшĕсем 1170 тенкĕ илеççĕ, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен тарса çӳрекенсен ачисем 1088 тенкĕ, ытти çемьесенче – 1006 тенкĕ. Ача 2 çултан иртнĕ, 18 çула çитмен пулсан, çак ӳсĕмри кашни ачашăн пĕччен амăшĕсем 642 тенкĕ, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен тарса çӳрекенсен ачисем 561 тенкĕ, ытти çемьесенче 478 тенкĕ илеççĕ. 7 çултан иртнĕ, 18 çул тултарайман ачасемшĕн пособи виçисем тата та урăхла: пĕччен амăшĕсем çав çулсенчи ачасемшĕн 993-шер тенкĕ, призывпа çар службинче тăракансемпе алимент тӳлессинчен тарса çӳрекенсен ачисем 911-шер тенкĕ, ытти çемьесенче 829-шар тенкĕ илеççĕ.

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.).**

Раççейре

## Чи пĕчĕк ĕç укçи– 4330 тенкĕ

***РФ Президенчĕ Дмитрий Медведев çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен чи пĕчĕк ĕç укçин виçине ӳстерессипе çинчен калакан саккуна алă пусна.***

***Паянхи чи пĕчĕк ĕç укçин виçи – 2300 тенкĕ. Çитес çултан вăл 4330 тенкĕпе танлашать.***

***2009 çулта ĕç укçине çак виçерен пĕчĕкрех тӳлеме юрамасть. Çак виçепе вăхăтлăх ĕçлеменнисене пособи шутласа панă чухне те усă кураççĕ. Чи пĕчĕк ĕç укçине ӳстерни бюджет тулашĕнчи фондсене куçаракан тӳлевсене пысăклатма та май парать.***

Кам епле ĕçлет?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ ИЮЛĔН 8-МĔШĔНЧЕ ПĔР ĔНЕ ПУÇНЕ МĔН ЧУХЛĔ СĔТ СУНИНЕ КĂТАРТНИ (КИЛОГРАМПА)**

**Колонкăсенче: 1. Кăçал сунă. 2. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан («–» – сахалрах).**

| | 1 | 2 |
|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 12,1 | 5,0 |
| «Волга» | – | -10,0 |
| «Восток» | 11,1 | -2,7 |
| «Герой» | 13,5 | -1,3 |
| К. Иванов яч. хис. | 10,1 | -1,9 |
| Ильич яч. хис. | 15,3 | -0,6 |
| Ленин яч. хис. | 13,0 | 2,0 |
| «Лидер» | 14,5 | 3,1 |
| «Оринино» | 12,9 | 0,1 |
| «Передовик» | 8,4 | 1,1 |
| «Свобода» | 12,3 | 0,2 |
| «Сеятель» | 11,9 | 6,2 |
| Суворов яч. хис. | 15,3 | 0,8 |
| «Рассвет» | 11,7 | 2,5 |
| «Ударник» | 12,7 | -2,7 |
| Чапаев яч. хис. | 11,2 | 2,0 |
| «Чемеево» | – | -7,3 |
| Чкалов яч. хис. | 12,2 | -1,1 |
| «Хлебороб» | 7,6 | 7,6 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **12,6** | **0,6** |

Çар комиссариатĕнчен пĕлтереççĕ

## Пирĕннисем ята ямарĕç

Тăван çĕршыва сыхлассине Раççей Федерацийĕн Конституцийĕнче те, «Çар тивĕçĕ тата çар службипе çинчен» федераллă саккунра та мала тăратнă. Халăхра та салтак ят чи сумлисенчен пĕри. Иртнĕ уйăхра мобилизаци йĕркипе 4 эрнелĕх вĕрентӳ ирттерни те районти арçынсем хăйсен тивĕçне пурнăçлассине тĕп вырăна хунине кăтартса пачĕ.

Кун пекки тахçанах пулманччĕ. Анчах çĕршыври лару-тăру улшăнни, Раççей тĕнче шайĕнче хăйĕн ятне ӳстерсех пыни кăçал сапасра тăракан çар çыннисене мобилизаци йĕркипе вĕрентĕве илме ыйтрĕ. Муркаш тата Элĕк районĕсенчен çак ыйтупа 150 çынна çар комиссариатне чĕнтĕмĕр. Вĕсенчен пĕр пайĕ пирĕн чĕнӳрен хăйсем тĕллĕн пăрăнса юлчĕ. Вĕсен хăтланăшне йĕрке хуралçисем тивĕçлĕ хак парĕç. Медицина тĕрĕслевĕ витĕр тухсан тата вырăнсенчи производство ыйтăвĕсене шута илнĕ хыççăн çар вĕрентĕвĕсене çар комиссариатĕнчен 24 çынна явăçтарма май килчĕ. Вĕсем Пермь крайĕнчи Марковский поселокра çар техникине управа лартассипе-тĕрĕслессипе анлă калăпăшлă ĕçсем пурнăçларĕç. Вĕрентӳ пĕтĕмлетĕвĕсемпе çар чаçĕ ыррă суннине шута илсе хамăр патăмăртан кайнă 4 çынна çар званийĕсене ӳстерсе патăмăр, вĕрентĕве хутшăннисем кашниех Хисеп грамотисене тивĕç пулчĕç. Вĕрентĕве 23 çултан пуçăнса 40 çулчченхи арçынсем хутшăнчĕç. Вĕсем хăйсен тивĕçне çӳллĕ шайра пурнăçлани район çыннисене тивĕçлипех савăнтармалла тесе шутлатăп. Вĕсем çакна пултарнишĕн çар комиссариачĕ енчен пурне те тав тăватăп.

Каламалла, çак вĕрентĕве хутшăннисен ĕç стажĕ пĕр куншăн иккĕ шутланĕ, ĕç вырăнĕнчи вăтам ĕç укçи сыхланса юлĕ...

Кунашкал вĕрентӳсем малашне те пулĕç. Хамăр район арçынĕсене вĕсенчен пăрăнса юлмасăр пурăнма ыйтатăп. Саккун вăл пуриншĕн те пĕрре.

**А. ПРОКОПЬЕВ,**
**Муркашпа Элĕк районĕсен çар комиссарĕ.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*

Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçине – Тушкасси ялĕнче пурăнакан **Илья Христофорович ИВАНОВА** июлĕн 10-мĕшĕнче 80 çул тултарнă ятпа чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, вăрăм кун-çул, канлĕ ватлăх сунатпăр, татах та нумай çул пирĕнпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр, сирĕн умăрта çĕре çити пуç таятпăр, эсир пурăнсан пирĕн пурнăç тулăхрах та ырăрах.

**Пĕтĕм чун-чĕререн саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, 15 мăнукĕ, 4 прамăнукĕ, тăхлачисем, çывăх тăванĕсем, пускилсем.**